Пĕрлехи информаци кунĕнчен

«Çынсемпе тимлĕ пулмалла, кадрсене сыхласа хăвармалла»

Иртнĕ юн кун республикăра пĕрлехи информаци кунĕ пулса иртрĕ. Çавна май пирĕн районта Чăваш Рспубликинчи «Капиталлă строительствăн республикăри управленийĕ» патшалăх унитарлă предприятийĕн ертӳçи Э.А. Аблякимов, Шалти ĕççен министрĕн пĕрремĕш çумĕ В.С. Яковлев пулчĕç.

Энвер Азизович район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа, унăн çумĕпе, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçипе В.Г. Никитинпа пĕрле Муркашра 40 хваттерлĕ çурт тунă çĕрте пулчĕ. Хальхи кăткăс лару-тăрура стройка ĕçĕсене пурнăçлама çăмăл маррине çурт тăвакан хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ» акционерсен хупă обществинче ĕçлекенсем лайăх ăнланаççĕ. Анчах çакă кризис тесе ним тумасăр ала усса ларнинчен темиçе хут лайăхрах: районта пурăнакансем хваттерлĕ пулаççĕ. Асăннă предприяти директорĕ В.Н. Семенов каланă тăрăх, предприяти çакна валли 13 миллион ытларах тенкĕлĕх кредит илнĕ. Паянхи лару-тăрăва пула малтан хваттер туянас кăмăллисен хушшинче пая кĕме тăхтаса тăракансем пуннине палăртрĕ Владислав Николаевич. Энвер Азизович республикăра пурăнмалли çуртйĕр фондне тумалли программа пурнăçа кĕмелли, çав хваттерсене çынсене арендăна пама палăртни çинчен каларĕ. Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче çак тĕллевпе 600-700 хваттер тумалла. Хваттерлĕ пулмалли çак меслет çынсен хваттерĕнче уйăхне 3 пин тенкĕ е хаклăрах та тӳлесе пурăннинчен темиçе хут лайăхрах. Арендăна хваттере тĕрлĕ çула пама май пур. Унта пурăнакан çын çав хваттерте пурăнать, анчах ăна хăй харпăрлăхĕ тума пултараймасть. Хваттерсем сутăнмасан, Энвер Азизович çак меслетпе районта усă курма пăхма сĕнчĕ.

– Эсир, кризиса пăхмасăр, кредитсемпе усă курса, çĕнĕ объектсем тунине ырламалла кăна, – палăртрĕ Э.А. Аблякимов. – Хальхи вăхăтра пирĕн строительствăна, халăх хуçалăхне малтанхи шайрах тытса тăмалла, коллективсене, кадрсене сыхласа хăвармалла, – терĕ Энвер Азизович.

Асăннă предприятире те çаплах тăваççĕ: кунсерен Муркашри объекта тунă çĕрте 10-20 çын ĕçлет. Пĕтĕмпе вара МСОра – 68-ăн. Стройкăра ĕçлекенсен вăтам ĕç укçи 8-10 пин тенкĕпе танлашать.

«Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерсен уçă обществинче те кризис вăхăтĕнче никама та ĕçрен кăларман. Продукцие туянакансем чакнипе (Шупашкарти 4 фирма туянать) хальхи вăхăтра пĕр кăмакана çеç ĕçлеттереççĕ пулсан та (талăкра 25-30 пин штук кирпĕч кăларать) малтанхи пекех кунта 169 çын ĕçлет. Завод директорĕ В.П. Тукмаков коллектив ĕçĕ-хĕлĕпе, малашнехи плансемпе паллаштарчĕ.

Кунта ĕçлекенсемпе ирттернĕ тĕл пулура Э.А. Аблякимов республикăра кризис вăхăтĕнче туса ирттерекен ĕçсем çинче чарăнчĕ. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов çур акине хатĕрленесси епле пыни çинче чарăнчĕ. Пĕчĕккĕн пулин те, аякка ĕçлеме каякансем ял хуçалăхне таврăнма пуçланине палăртрĕ.

– Çăмăл мар лару-тăрура пирĕн пурин те уйрăмах çынсемпе тимлĕ пулмалла. Итлеме пĕлни те вĕсене малалла пурăнма, ĕçлеме хавхалантарать. Çакăн чухне кăна эпир йывăрлăхсене çĕнтерме пултарăпăр, – палăртрĕ Шупашкартан килнĕ хăна.

Унтан информаци ушкăнĕ Муркашри физкультурăпа спорт комплексĕнче пулчĕ. Унăн директорĕн А.Н. Куликовăн сăмахĕнчен çакă палăрчĕ: кунта халăх яланах йышлă.

– Апла пулсан эпир сирĕнпе пĕрле тăрăшни сая каймарĕ. Ку сывлăха çирĕплетмелли центршăн сирĕн те, пирĕн те пит хĕрелмест, – терĕ вăл кăмăллăн. **Л.ПАВЛОВА.**

Тасалăхпа тирпейлĕхшĕн

Намăс та мар-ши вара?

Юлашки вăхăтра тĕрлĕ органсенчи тĕрĕслев ĕçченĕсем Муркаш ял тăрăхĕнче çӳп-çап пăрахнă вырăнсене тупса палăртса протоколсем çырчĕç, мана 12 пин те 500 тенкĕ штраф памалла тунăччĕ. Кун пирки халăхпа калаçса, ял хушшинче тата тавралăхра çӳп-çап пăрахмалла марри пирки калаçусем тăтăшах ирттернĕччĕ. Анчах та ăна пурте шута илесшĕн мар. Муркаша тĕрлĕ ялсенчен çынсем нумай ĕçлеме килеççĕ. Хăшĕ-пĕрисем хăйсен ялĕнче, килĕнче Муркашринчен те тасарах пурăнасшăн. Çавăнпа ĕçе килнĕ чухне килти çӳп-çапа хăйсен машинисем çине тиесе килеççĕ те Муркашри çӳпĕ урнисем патне пăрахса хăвараççĕ.

Январĕн 19-мĕшĕнче Муркаша килнĕ хăнасене, шкул ачисене район музейĕ çывăхĕнчи урна патĕнчен иртсе кайма та намăс пулчĕ. Çӳп-çап 15 тăваткал метр сарлакăш сапаланса выртать. Çак тасамарлăхра вара Муркашри ветеринари лабораторийĕн расчетки тупăнчĕ. Мĕн кăна килсе пăрахман пулĕ! Расчетка хуçи вара – Атапай ялĕнче пурăнакан Т.Н. Киселева. Унăн упăшки Муркашри пĕр предприятире ĕçлет. Ĕçе килнĕ чухне çӳп-çап пакечĕсене машина çине хунă та Муркаша килсе пăрахнă.

Халĕ вĕсем пирки тивĕçлĕ органсем явап тыттарма материалсем хатĕрлеççĕ. Вĕсенех çак тасамарлăха пуçтарма тиврĕ.

Хальхи вăхăтра Çурлатри ялĕнче çул тума проект хатĕрлетпĕр. Анчах та хальхи пекех тасамарлăх, тирпейсĕрлĕх пĕтмест пулсан, ял хушшинче асфальт çул пуласси шанчăклах мар.

Муркаш ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕн ларăвĕ кашни хуçалăхпа организаци хăйĕн таврашĕнчи территорие тирпейлесе тăма тивĕç тесе йышăннăччĕ. Анчах та хăш-пĕр предприятисемпе организацисене пырса кĕнĕ çĕрти тасамарлăх чуна ыраттарать. Ертӳçĕ хăй ĕçе килнĕ чухне çак йĕркесĕрлĕхе курмасть тата унпа килĕшсе пурăнать пулсан, унăн ĕç пахалăхĕ пирки те пĕтĕмлетӳ тума пулать.

Н. НИКИТИН,
Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: кун пек йĕркесĕрлĕх кăмăла хуçать.

Сывлăх

Асăрханăр, грипп!

«Аслати авăтмасăр арçын сăхă сăхмасть» – теççĕ вырассем. Хăйсен пурнăçне медицинăпа çыхăнтарнă арçынсем çаксен ретне кĕмеççĕ пулĕ. Мĕншĕн тесен вĕсен «аслатие» çитиччен сирсе яма тăрăшмалла. Кашни çул килекен грипп чирĕ вара аслати евĕрех. Ăна сарălма парас мар тесе «Сывлăх» нацпроектпа килĕшӳллĕн акă пĕлтĕрхи çул та шкул çулне çитмен 903 ачана, шкулта вĕренекенсене пурĕ 3233 çынна, медицина ĕçченĕсемпе учительсене те прививка тунă.

Грипп питĕ час ерекен вируслă инфекци. Çулсеренех гриппа пĕтĕм тĕнчери çынсен 15 проценчĕ таранах чирлет. Пĕчĕк ачасемпе ватă çынсене çак инфекци чирĕ вилĕм патне те илсе çитерме пултарать. Гриппа часчасах сывлав органĕсем, централлă нерв системи, йывăр чирлесен чĕре сосучĕсем хавшакланаççĕ.

Грипп вирусĕсем виçĕ тĕрлĕ пулаççĕ: А, В тата С. А вирус организма лексен çынсем тата хăш-пĕр чĕр чунсем йывăртарах чирлеççĕ. С вирус вара çăмăлли шутланать.

Грипп сывлăш урлă ерет, ăнсăртран, çивĕччĕн пуçланать. Чылай чухне чир йывăррăн пуçланать: пуç ыратать, ӳт-пӳ температури хăпарса каять – 38-40 градуса çитет, вăй чакать, сăмсана та сывлама йывăр, куççуль юхать. Йывăртарах чирленĕ чух тата хăстарма та пултарать. 5-10 кун хушшинче организм вирусран тасалса çитет.

Нумайăшĕ чире ура çинчех ирттерсе ярать. Ку тĕрĕс мар. Гриппа чирленĕ чух вырăн çинче выртмалла. Унсăрăн чир тарăна кайма пултарать. Сипленессе те тухтăрсемпе канашламасăр сипленмелле мар. Грипп тарăна кайса пневмони чирне çул пама пултарать. Çавăнпа та асăрханулла пулмалла.

Гриппа чирлес мар тесен, эпидеми сарăлнă вăхăтра халăх йышлă пухăнакан вырăнсенче сахалтарах пулма тăрăшмалла. Гигиена правилисене те çирĕп пăхăнмалла: алăсене час-часах çумалла, чирлес хăрушлăх пысăк пулсан марля повязкине те çыхмалла. Организм иммунитечĕ вăйлă пулни те чирлессинчен хăтарма пултарать. Çавăнпа та аскорбинка тата ытти поливитаминсене йышăнни пулăшать. С витамин вара йӳçĕтнĕ купăста сокĕнче, лимонра, кивире, мандаринра, апельсинпа грейпфруктра та нумай. Таврара грипп сарăлнă вăхăтра кунне 2-3 шăл ыхра е сухан çини те пулăшать. Чир паллисем пуçлансанах пыра тата сăмсана фурациллинпа, марганцовка е апат содин растворĕпе чӳхемелле. Сăмса ăшне суханпа ыхраран хатĕрленĕ çупа сĕрни, урасене горчица ваннинче тытни пулăшать.

Хăвăра чиртен упрамаллине яланах асра тытăр.

Г. СОКОЛОВА,
Муркашри тĕп больницăри врач-эпидемиолог.

Редакци почтинчен

Кашнинпех кăмăллă

Пурнăç йывăрланса пырать, çынсем те темшĕн усалланса пынăн туйăнать. Анчах ырă кăмăллă та йывăр лару-тăрура юнашаррисене ăнланакан, пулăшакан çынсемсĕр мар-ха çут тĕнче.

Эпир Мăн Сĕнтĕрти инвалидсемпе ваттисен çуртĕнче пурăнатпăр. Вун виççĕн – пĕр килти пек. Мĕншĕн тесен шăпах çакнашкал условисем туса пама тăрăшаççĕ те кунта ĕçлекенсем. Уйрăмах ваттисен çурчĕн ертӳçи çинчен çырса пĕлтерес килет.

Çак илемлĕ хĕрарăм, Людмила Геннадьевна, кунта хӳтлĕх тупнă кашни ватă çын валли ăшă та чуна лăплантаракан сăмахсем тупма пĕлет. Эпир, ватă çынсем, ачасем евĕрех вĕт: часах кӳренме те пултаратпăр, часах кăмăлĕ те улшăнать пирĕн... Людмила Геннадьевна вара пуринпе те калаçма вăхăт тупать, чăтăмлăхне те çитерет. Эпир тимлĕх нумай ыйтатпăр çав. Сăпайлă та ырă чунлă хĕрарăмăн сăмахĕсем те пирĕншĕн тепĕр чух эмелтен темиçе хут лайăхрах. Пирĕнпе пĕрле юнашар ларса телевизорпа пĕр-пĕр передачăна та пăхса илет вăл. Хыççăн вара мĕн пĕлни-курнине сӳтсе яватпăр. Эпир пурăнакан çурт ăшăрах та хăтлăрах пултăр тесе сахал мар тăрăшать вăл.

Кĕçех Людмила Геннадьевнан çуралнă кунĕ те çитет. Эпир, ватă мучи-кинемейсем, кунта ĕçлекен социаллă ĕçченсемпе пĕрле Людмила Геннадьевнана çак ятпа чĕререн саламлатпăр. Ăшă хĕвелпе янкăр тӳпе пултăр ялан санăн пурнăçунта. Пире пысăк тимлĕх уйăрнăшăн пысăк тав.

Мăн Сĕнтĕрти инвалидсен тата ваттисен çуртĕнче пурăнакансем.

Отчетпа суйлав пухăвĕсем

Пĕр ĕмĕтпе, малашлăх çулĕпе

Хĕл вĕçленсе пырать. Çурхи хĕвел ăшшипе ял хуçалăх ĕçченĕ çур акине хатĕрленет. Иртнĕ çулхи ĕçсене пĕтĕмлетнĕ май тата çурхи уя тухиччен вăхăт пуррипе усă курса ял хуçалăх производство кооперативĕсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем иртрĕç. Хăйĕн пурнăçне ял хуçалăхĕпе явăçтарнă кашни ĕçченшĕнех пĕлтерĕшлĕ вĕсем паян: мĕн ĕçлĕпĕр малашне, мĕнле аталанăпăр, хăш çĕнĕлĕхе алăка яри уçса кĕртĕпĕр?

Пуш уйăхĕн 14-мĕшĕнче Кашмашсемпе Çатракассисем тата Йӳтĕркассисем хăйсен çулталăкри Аслă пухăвне пуçтарăнчĕç. Вăл Кашмашри Культура çуртĕнче иртрĕ.

«Свобода» хуçалăх ĕçченĕсем кун йĕркине 6 ыйту кĕртрĕç. Яланхиллех пухăва ерсе пыма президиум суйларĕç. Пухăва пĕрремĕш уй-хир бригадирĕ А. Блинов ертсе пычĕ. Кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйтăва – иртнĕ çулхи аталанăвăн ӳсĕмĕсем – пуçличчен хуçалăх ертӳçи К. Сретинский ĕмĕр тăршшĕпе хуçалăхра вăй хурса тивĕçлĕ канăва тухнисене Хисеп хучĕсемпе укçан парнесем парса саламларĕ. Çамрăк ăрăва вĕсенчен тĕслĕх илме ыйтса каларĕ. Кун хыççăн Кронид Ефимович хуçалăхăн иртнĕ çулхи ĕçĕхĕлĕпе паллаштарчĕ. Пĕтĕмлетӳре хуçалăх çĕрпе тухăçлă усă курни, ӳсен-тăран продукцийĕ туса илсе мĕнле тупăш илни, уй-хир ĕçĕнче мĕнле çĕнĕлĕхсем пурнăça кĕртни çинчен каласа пачĕ.

– Пирĕн пĕр тикĕс малалла аталанма условисем пур. Вĕсемпе тухăçлă усă курса выльăх-чĕрлĕх йышне сыхласа хăварасчĕ, çу кунĕсенче вĕсем валли ытлă-çитлĕ апат хатĕрлесчĕ, мĕн пуррипе перекетлĕ усă курасчĕ. Çакнашкал аталану çулĕпе кайсан пуриншĕн те аван пулĕ, – терĕ К. Сретинский пухăннисене кăçал та пĕлтĕрхинчен кая юлмасăр ĕçлеме чĕнсе каланă май.

Умра – çур аки. Çавăнпа та уй-хир ĕçĕсене кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçласси пирки те сăмах пулчĕ ертӳçĕ докладĕнче. Уйрăммăн илсен, сĕрмелли-сунтармалли материалсене перекетлесси кашнине шухăшлаттармалла. Çак çулпа кайсан кăна хуçалăх рынок хутшăнăвĕсенче çухалса каймĕ, хăйĕн ятне çухатмĕ.

Хуçалăх ертӳçин отчетлă доклачĕ хыççăн ревкомисси председателĕ А. Анисимова сăмах илчĕ. Вăл кашни ыйту çинчех тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Специалистсем вырăнта пулни, вĕсем çĕнĕлĕхсем çине тивĕçлĕ пăхни хуçалăх экономикине хăватлăрах аталанма пулăшасси пирки каларĕ. Тĕрлĕ парăмсемпе вăхăтра татăласси те хуçалăхра çивĕч тăнине палăртрĕ.

И. Алексеева экономист хуçалăхăн 2009 çулхи ĕçпе финанс планĕпе паллаштарнине те пухăннисем шыв сыпнă пек итлерĕç. Пурнăçламалли, паллах, нумай. Вăл вара пĕр-ик çын тăрăшулăхĕнчен кăна килмест. Пурте производствăпа финанс лавне пĕр çын пек кӳлĕнсен кăна çĕнĕ ӳсĕмсене çĕнме пулĕ. Çак çул çинче коллективлă килĕшĕвĕн те тӳпи пур. Ăна та пухăннисем пĕр саслăн çирĕплетсе хăварчĕç.

Пуху хыççăн вырăнти артистсем «Хусах Ваççа авланать» камит спектакль лартса пачĕç. **Игорь МАЙКОВ.**

Спорт хыпарĕ

Ăмăртура Орининсем çĕнтерчĕç

Спорта юратакансем Çатракассинчи вăтам шкула мартăн 15-мĕшĕнче чылайăн пухăнчĕç. Çак кун Хуракасси выçăлккинче çуралса ӳснĕ, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ пулса тăнă Александр Быков ячĕпе спартакиада иртрĕ. Герой ячĕпе тăванĕсем куçса çӳрекен кубок та çирĕплетнĕ. Шăпах çавна çĕнсе илессишĕн 10 команда ăмăртрĕ.

Чи малтанах пурте йĕлтĕр йĕрĕ çине васкарĕç. Кайран волейбол, шашка, шахмат тата сĕтел çи теннис вăййисем иртрĕç. Пур çĕрте те хĕрӳ тупăшусем пулчĕç. Анчах чи вăйлă, чăтăмлă, хастар команда Оринин хуçалăх команди пулчĕ. Иккĕмĕш вырăна – Çатракасси вăтам шкулĕн, виççĕмĕш вырăна «Виват» общество командисем тивĕçрĕç. Çĕнтерӳçĕсене медальсемпе тата хаклă парнесемпе чысларĕç, укçа парса хавхалантарчĕç. Пурте спорт уявĕпе кăмăллă юлчĕç. Ăмăртăва йĕркелеме пулăшакансене çакăншăн пурне те тав сăмахĕ калатпăр.

С. ФЕДОРОВА,
хĕрарăмсен Канашĕн ертӳçи.